Уяв умĕнхи интервью

# Умри тĕллевсем тата пысăкрах

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Тӳрех каласа хăварам: уяв умĕн уçăлнă «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексне тунă çĕрте «Парнас» ТСК ООО строителĕсем тăрăшрĕç. Çуртăн строительство калăпăшĕ – 25737,79 пин куб. м., пĕтĕмĕшле калăпăшĕ – 3409,05 тăв. м. Сменăра ку комплексра 151 çын вăхăта усăллă ирттерме пултарать. Çакна валли кунта пур услови те пур: кунтах Муркашри искусство шкулĕн хореографи, художество, вокал, çавăн пекех тренажер, боксерсемпе кĕрешӳçĕсен залĕсем, бассейн, спортзал вырнаçнă.

Çĕнтерӳ паркĕнче тротуара çĕнĕрен турăмăр, кунта светильниксем вырнаçтартăмăр. Район центрĕн тĕп урамĕсенче декоративлă картасем тытрăмăр

Кĕске вăхăтрах районта нумай çула тĕпрен юсаса хута ятăмăр. Çав шутра çӳлерех асăннă Муркашри Чапаевпа (400 м) Ленин (585 м) урамĕсенчи çулсемсĕр пуçне «Волга»-Вăрмой-Вускасси-Иштерек (1,852 км), Мăн Сĕнтĕр-Ильинка-Апчар (1,603 км) çулсене туса пĕтернĕ. Вĕсемсĕр пуçне Муркаш-Хорнуй-Платкасси (720 м), Катăкуй-Турхан-Сарчак (обществăлла центр, 600 м), Тойкилтĕ-Кĕртекасси (3,13 км), Автанкасси-Муркаш-Козьмодемьянск (17,5 км), Муркаш-Турай-Сăр (4,5 км), «Волга»-СПК «Гигант»-Мăн Сĕнтĕр-Шашкар пристанĕ (10,8 км) çулсене юсаса пĕтернĕ. Асăннă ĕçсене «Волгодорстрой», «Дорстрой», «Водстрой», «Автодорсервис», «Волгодорремстрой», «Стройинвест» подрядчиксем пурнăçларĕç.

**– ЧР Президенчĕн Указĕпе килĕшӳллĕн ялсем патне асфальт çулсем тăвас ĕç пырать. Мĕнле шайра вăл?**

– Кăçал пирĕн пĕтĕмпе 26 ял патне асфальт çул сарса пĕтермелле. Çав шутран – пĕлтĕр вак чул сарнă çулсене те. Рыккакасси, Милютакасси, Елача – Иштерек, Елача, Çĕн Тăмлай, Вăрмой, Торинкасси, Йĕрĕхкасси, Очăкасси, Сарчак, Канаш выççăлкки, Ивановка, Оринин, Вăрманкас Хачăк, Макçикасси, Хачăк сали патне çити, çавăн пекех Мăн Шашкар – Мемеккасси – Хунтăкасси – Хопкĕпер, Мăн Шашкар – Мемеккасси – Хунтăкасси – Хыркасси, «Волга» – «Гигант» тĕп усадьби – Мăн Сĕнтĕр – Анаткасси, «Волга» – «Гигант» тĕп усадьби – Анаткасси – Çеçмер çулсене тăвасси малалла пырать.

Пĕтĕмпе 2 çур çулта 22,393 км çул хута ямалла.

**– Районта çурт-йĕр тăвас тĕлĕшпе ӳкерчĕк мĕнлерех?**

– Кашни çулах районта нумай хваттерлĕ çуртсем хута каяççĕ. Кăçал хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕн строителĕсем Москакассинчи 36 хваттерлĕ çурта туса пĕтерсе хута яраççĕ. Çавăн пекех Муркашри Парк урамĕнче 40 хваттерлĕ çурт тума пуçлаççĕ.

Уйрăм çынсем те ытларах та ытларах çуртсем лартма пуçларĕç.

Ялта пурăнакан, ĕçлекен çамрăк çемьесемпе çамрăк специалистсем «2010 çулччен ялсене социаллă аталантарасси» программăпа килĕшӳллĕн хăйсен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма пултараççĕ. Ялта пурăнакан граждансене субсиди пама пирĕн района федераллă бюджетран 1700 пин тенкĕ, ялта пурăнакан, ĕçлекен çамрăк çемьесем валли 1460 пин тенкĕ укçа уйăрнă. 6 граждана пĕтĕмпе 1696,700 пин тенкĕлĕх социаллă тӳлев илме свидетельство панă.

Ялта пурăнакан, ĕçлекен çамрăк çемьесемпе çамрăк специалистсем валли социаллă тӳлев илме федераллă бюджетран 1450,8 пин тенкĕ, вырăнти бюджетран 1934,4 пин тенкĕ уйăраççĕ. Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствине 4 çамрăк çемьепе çамрăк специалист свидетельствăсем илме документсем тăратнă.

Çамрăк çемьесем тата 2002-2010 çулсенчи «Çуртйĕр» федераллă тĕллевлĕ программăн «Çамрăк çемьесене çурт-йĕрпе тивĕçтересси» подпрограммипе те çурт-йĕре лайăхлатма пултараççĕ. Асăннă программăпа килĕшӳллĕн кăçал пурĕ 11 çамрăк çемье социаллă тӳлевпе усă курма ирĕк паракан свидетельствăсем илчĕç. Ку программăпа района федераллă бюджетран пĕтĕмпе 3240,054 пин тенкĕ, республика бюджетĕнчен 864,014 пин тенкĕ уйăрнă.

Пурăнмалли пӳлĕмсемшĕн социаллă тӳлев пулнипе ăна туянас текенсен йышĕ чакмасть. Унсăр пуçне çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма социаллă ипотека кредитне те параççĕ.

Районта çавăн пекех ветерансене, инвалидсемпе ачаран инвалид пур çемьесене, тăлăх ачасене çурт-йĕрпе тивĕçтересси çине те пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Асăннă категорисене кĕрекенсене вара çурт-йĕрпе социаллă найм килĕшĕвĕпе тивĕçтереççĕ.

**– Мĕнлерех задачăсем тăраççĕ паян районти строительсен умĕнче?**

– Малалла социаллă сферăн инфратытăмĕн объекчĕсене ытларах тума палăртатпăр.

Тепĕр пысăк ĕç вăл – 2009-2015 çулсенче урамсенчи тĕп çул сечĕсене тумалли-реконструкцилемелли республикăри адреслă инвестици программипе килĕшӳллĕн пур ялсенчи тĕп урамсенче те асфальт çул тумалла. Çавăн пекех республикăри тĕллевлĕ программăсене кĕме Муркашри Культура çуртне реконструкцилемелли тата ялсене шывпа тивĕçтерессипе проектсем хатĕрлетпĕр. Унсăр пуçне йăлари каяшсене, çӳп-çап тăкмалли полигона тăвассипе, çĕнĕ урамсене электрификацилессипе проектсем хатĕрлес ĕçсем пыраççĕ. Тата тепĕр пысăк задача – 2007 çулхи июлĕн 21-мĕшĕнчи 185-мĕш номерлĕ «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха реконструкцилеме пулăшмалли фонд çинчен» федераллă Саккунпа килĕшӳллĕн нумай хваттерлĕ çуртсене тĕпрен юсама пуçламалла.

**– Район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕ çӳлерех асăннă ĕçсене йĕркелесе ертсе пыраканĕ пулса тăрать.**

– Коллективра пултаруллă та ăста специалистсем ĕçлеççĕ. Г.А. Павлов пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх енĕпе ответлă. Ф.А. Филиппова – тĕп специалист-эксперт (тĕп бухгалтер), Н.Ф. Коннов тĕп специалист-эксперт (архитектор), Н.Л. Звонков – çул-йĕр ыйтăвĕсемпе, Г.Г. Симаков территорисене хăт кĕртессипе тата экологипе, А.Ю. Скворцов шыв пăрăхĕсем, пурăнмалли çуртсем тăвассипе, урамсене электрификацилессипе ĕçлекен тĕп специалист-экспертсем, çавăн пекех граждансен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатас ыйтусемпе ĕçлекен О.В. Тимофеева, В.А. Аникина ертсе пыракан специалист-экспертсем хăйсен тивĕçĕсене тăрăшса пурнăçлаççĕ.

**– Эппин, управлени специалисчĕсене те, районти строительсене те уяв ячĕпе саламлатăп.**

**Л.ПАВЛОВА калаçнă.**

Августăн 9-мĕшĕ – Физкультурниксен кунĕ

# Чăн-чăн тренер

Çанталăк çумăрлине пăхмасăрах кăнтăрла иртсен Тойкилтĕ ялне çитрĕм. Кунта пĕрре мар пулнă пулин те халĕ çеç вырăнĕ питĕ лăпкă туйăнчĕ. Шăпах çакăнти шкулта Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ тренерĕ Аверкий Васильевич Васильев тăтăшах ачасемпе тренировкăсем ирттерет.



Мĕн пĕчĕкрен спорта кăмăлланăскер тивĕçлĕ канура пулсан та паянхи кун юратнă ĕçнех туса пырать. Тойкилтĕри тата Турайри вăтам шкулсенче чунне парсах ачасемшĕн тăрăшать. Хăй пурăнакан Пачкасси ялĕнчен асăннă вырăнсене ăна çуллахи вăхăтра велосипедпа, хĕлле йĕлтĕрпе çӳренине яланах курма пулать. Çăмăл кĕлеткеллĕ, спортсăр пĕр кун та пурăнма пултарайман тренера никам та çитмĕле çывхарса пырать темĕ. Пачах хирĕçле – тепĕр çамрăкран та ирттерет.

Шкулти спортзалта черетлĕ тренировка пырать. Ачасен савăк сасси янăраса кăна тăрать. Пĕрре пăхсанах вĕсене кунта килĕшнине асăрхарăм. Аверкий Васильевич вара хăйĕн вĕренекенĕсене аякран пăхса тăмасть. Кашни утăмĕнчех вăл ачасемпе пĕрле.

– Хам тĕслĕх кăтартмастăп пулсан кама курса вĕренмелле-ха вĕсен? – тет вăл ыйтуллăн. – Ман шутпа эпĕ ачасемпе пĕрле вылятăп, чупатăп, утатăп пулсан тин вĕсен спорта юратасси кунран-кун вăйланса пырĕ. Ачасемпе ача пек пулма тăрăшатăп. Вĕсене тĕрлĕ лару-тăрура яланах пурнăçри, хамăн ĕç практикинчи тĕслĕхсене илсе кăтартатăп.

– Сирĕн ĕç стажĕ питĕ пысăк. Анчах мĕнрен пуçланнăха спорта кăмăлласси? – интересленетĕп эпĕ.

– Тӳрех калама пултаратăп: Йӳçкасси шкулне çӳреме пуçланăранпа. Эпĕ унта саккăрмĕш класа çӳреме тытăннă. Кашни кунах çуран утнă. Хĕлле май килнĕ чух йĕлтĕр сырнă. Хусканăва, спорта юратасси çакăнтан пуçланчĕ ĕнтĕ. Шкулшăн тĕрлĕ ăмăртусене хутшăнма пуçларăм. Вунă класс вĕренсе пĕтернĕ хыççăн районти комсомол организацийĕ урлă Казахстана ячĕç. Ун чухне целина вăхăчĕ пулнă. Унти механизаци училищинче вĕреннĕ вăхăтра вара спорт ĕçне хытах тытăнтăм. Çара каиччен йĕлтĕрпе 1-мĕш разряд пулнă. Хĕсметре те хамăн ĕçе тата результатсене пăрахăçа ямарăм. Çавăнпа та икĕ çул иртнĕ хыççăн Мускаври физкультура институтне экзаменсене ăнăçлă тытса вĕренме кĕтĕм. Çарта организма спортпа пиçĕхтерни вĕренӳ çулĕсенче самаях пулăшрĕ. 1966 çулта вара района таврăнтăм, – аса илет Аверкий Васильевич.

Ачасем футболла выляса пĕтерчĕç. Малалла вĕсен чупма тата хăвăрт утма пулăшакан хăнăхтарусем çине куçмаллине пĕлтерчĕ тренер. Тренировкăсем палăртнă пек тĕрлĕ енлĕн пыраççĕ. Ачасене ытларах вăйă майĕпе ĕçлеттерсе пырать ĕçĕнче пуян опыт пухнă вĕрентекен. Çав хушăрах телефон шăнкăравĕ янăрарĕ. Тренировкăна ачи мĕншĕн килейменнине ăнлантарать иккен пĕр вĕренекенĕн амăшĕ.



Эпĕ вара вăхăтпа усă курса ачасен шухăш-кăмăлне пĕлес терĕм.

– Пирĕнпе юнашар çакăн пек лайăх вĕрентекен пулнăшăн эпир питĕ савăнатпăр. Пирĕн атте-аннесем те хавас. Çавăнпа та çуллахи вăхăта та кунтах ирттеретпĕр. Чăн-чăн спортсменсем пуласшăн: Валентина Егорова пек, Андрей Аршавин футболист пек... Европа шайĕнчи ăмăртусенче те пулса курас килет, – паллаштараççĕ вĕсем хăйсен ĕмĕчĕсемпе. Ачасенчен чи кĕçĕнни, иккĕмĕш класа кайма хатĕрленекен Анжела Федорова вара сăпайллăн: «Аверкий Васильевич пек пуласчĕ», – терĕ.

Сăмах май, Анжелăн икĕ пиччĕшĕ те, Евгенийпе Валера, кунтах спорта хăнăхса пыраççĕ. Вĕсен çемйи спортпа питĕ туслине ку тăрăхра пурте лайăх пĕлеççĕ.

– Эсир хăш-пĕр ачасемшĕн кумир пулса тăнă та иккен. Сирĕн вара ача чух кам пек пулас килнĕ? – кăсăкланатăп малалла Аверкий Васильевичран.

– Çамрăк чух мана темиçе хут Олимп вăййисен чемпионĕ пулнă Павел Колчин йĕлтĕрçĕ питĕ килĕшетчĕ. Пӳ-сипе те ман пекрехчĕ вăл, тен, çавă та витĕм кӳнĕ. Чупас енĕпе вара манăн кумир Владимир Куц пулнă. Вăл та Олимп вăййисен çĕнтерӳçи пулнăскер. Шăпа мана хăй вăхăтĕнче пысăк парне хатĕрлесе пачĕ темелле-ши, Мускавра вĕреннĕ чухне Павел Колчинпа хире-хирĕç ларса калаçма та, пĕрле тренировкăсенче пулма та тӳр килчĕ. Манăн вĕренекенсем те май килнĕ таран тăрăшса ĕçлесен хăйсен кумирĕсемпе тĕл пулма пултарччăр. Паллах, ашшĕ-амăшĕсем ăнланни, пулăшса пыни кирлĕ.

– Ашшĕ-амăшĕсем ачисен çитĕнĕвĕсемпе, вĕсен спорт пурнăçĕпе интересленсех тăраççĕ пулас, – пĕлтертĕм шухăша хама та шкулта вĕреннĕ чух спорта юратма вĕрентнĕ учителе.

– Ашшĕ-амăшĕсем енчен тимлĕх пурри питĕ савăнтарать. Ачисем малти вырăнсене çĕнсе илни, паллах, вĕсене те хаваслантарать. Алена Емельянована – ĕçлеме пултараканскер, пултаруллă çамрăк спортсменка. Паянхи куна Чăваш Республикинче хăй вăхăтри хĕрсем хушшинче малта пырать. Аслăраххисемпе те ăмăртма пултарать. Гриша Иванов, Роман Юсупов, Андрей Петров – республика шайĕнчи ăмăртусенче хăйсен кăтартăвĕсене лайăхлатсах пыраççĕ, малти вырăнсене тухаççĕ. Вĕсемшĕн эпĕ савăнатăп. Малалла аталанса пыма сывлăхĕсем çирĕп пулччăр çеç. Ытти ачасен те малашлăх утăмĕсем япăх пулмалла марри сисĕнет. Шкултан вĕренсе тухиччен Раççей шайĕнче çĕнтермелле пултăр пирĕн. Тăрăшаççĕ ачасем. Нумай пулмасть Етĕрне районĕнчи Килтĕшре иртнĕ ăмăртуран та лайăх кăтартусемпе таврăнтăмăр. Малти вырăнсем пирĕн ачасенче пулчĕç, – хаваспах пĕлтерчĕ тренер.

Шкул директорне Игорь Аркадьевич Сергеева ĕçре ăнланса, пулăшса пынăшăн Аверкий Васильевич пысăк тав сăмахĕсем калать: «Ачасене юратать. Çамрăк спортсменсене хушма апатлану туса пама та килĕшрĕ. Лайăх апат-çимĕççĕр спортсмена аталанса пыма йывăр. Поварĕсем те питĕ тăрăшуллă. Вĕрентекенсен коллективĕ лайăх. Çапла вара ĕçлес туртăм тата вăйлансах пырать», – тет вăл.

Аверкий Васильевич хăйĕн юлташĕсемпе, Красноармейски районĕнчи В.П. Петровпа тата Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Н.А.Васильевпа, тахçантанпах тачă çыхăну тытать. Вĕсем те пултаруллă тренерсемех иккен. Чăваш Республикине çĕнĕ ятсем кăлараççĕ. Çапла ĕçтешсем пĕр-пĕринпе калаçса, çав вăхăтрах тупăшса та пыраççĕ.

Çамрăк чух пур çынна та яланах яштак кĕлеткеллĕ, вăйлă пулас пек туйăнать. Анчах хĕрĕх урлă каçсан вара «малтанах хамăн сывлăхшăн ма тăрăшмарăм-ши» темелли пулатех. Çавăнпа та мĕн ачаран пуçласа физкультура çине çиелтен пăхмалла мар. Паллах, пурте пысăк спорта тухаймĕç. Халĕ тата, сăмахран, йĕлтĕр спортне илес пулсан ял ачишĕн вăл питĕ хаклă. Çăмăл атлетика вара ял ачишĕнех темелле. Ӳркенмелле мар çеç...

– Аверкий Васильевич, вунă минут иртрĕ. Эпир васкамасăр чупасси çине куçатпăр, – терĕç ывăнма пĕлмен ачасем.

Çапла кăмăллă иртеççĕ тренировкăсем. Кунне виçĕ сехете яхăн туптаççĕ хăйсен ăсталăхне Тойкилтĕ шкулĕнчи вĕренекенсем. Ваттисем çунашкана çулла хатĕрлеме каланă пек Аверкий Васильевич ертсе пынипе хĕлле валли йĕлтĕр трассине хатĕрлессипе те çу кунĕсенчех тимлеççĕ. Апла пулсан хăйсен тĕллевсене пурнăçа кĕртесшĕнех вĕсем. Тĕрлĕ ăмăртусем вара çамрăк спортсменсене валли хальхи вăхăтра çителĕклех.

– Канăç паман ыйтусем те пур пулĕ, – çаплах кăсăкланатăп эпĕ.

– Мана тахçанах ĕнтĕ пĕр ыйту канăç памасть. Пире валли (эпир 60 çултан иртнĕ спорт ветеранĕсем) ăмăртусем сахал пулни кӳрентерет. Стартсенче вара çула пăхса 50-ран иртнисем тесе ăмăртатпăр. 60 çултан иртнисене уйрăм категори туса ăмăртусенче хутшăнтарсан питĕ аван пулмалла пек. 50 çул вăхăт-и вăл? Малалла та пурăнмалла. Ман шутпа ветерансем çине кăшт ытларах тимлĕх уйăрмалла. Вăхăтра эпир те район чысĕшĕн сахал мар тар тăкнă вĕт, – чунне уçса пачĕ нумай пулмасть аслă категорие тепĕр хут çирĕплетнĕ тренер. Апла пулсан татах ĕçлемелле-ха пултаруллă вĕрентекенĕн, татах спорт тĕнчине çĕнĕ ятсем кăларассишĕн тăрăшмалла.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: А.В. Васильев тренер хăйĕн вĕренекенĕсемпе; Евгений, Валера тата Анжела Федоровсем спортпа питĕ туслă.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Вулакан пултарулăхĕ

## *Эпир – вăрçă ачисем*

Эпир ача пулман-и,
Хурлăх-нуша курман-и?
Атте фронтра,
хамăр ĕçре –
Час-час выçă пулман-и?
Атте атă çĕлетчĕ –
Çӳрерĕм çăпатапа.

Кайман пулсан вăл вăрçа
Çӳрĕттĕм эп атăпа.
Атте укçа тăватчĕ –
Çӳрерĕм эп шупăрпа.
Кайман пулсан вăл вăрçа
Çӳрĕттĕм эп костюмпа.
Атте тыр(ă) ӳстеретчĕ –
Ӳсрĕм уйри крахмалпа.

Кайман пулсан вăл вăрçа
Ӳсĕттĕм шур кулачпа.
Атте вĕрентесшĕнччĕ –
Ĕçлерĕм эп колхозра.
Кайман пулсан вăл вăрçа
Вĕренĕттĕм тухтăра.
Пурнăç питĕ савăкчĕ –
Çитĕнтĕмĕр нушапа.

Хаяр вăрçă пулмасан
Ӳсĕттĕмĕр савăнса.
Тăшман ытла хаярчĕ –
Çĕнтертĕмĕр усала.
Тавтапуç Совет Çарне
Хăтарнăшăн çĕршыва.

**Любовь РОМАНОВА.**
Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Шупуç ялĕ.